Федераллă службăсен ĕçченĕсене сăмах паратпăр

# Тивĕçлĕ ĕç тата тивĕçлĕ ĕç укçи пултăр



***Паллă ĕнтĕ, пирĕнтен паян кашнийĕнех хăйне килĕшекен ĕç пулни, тивĕçлĕ ĕç укçи ĕçлесе илме май пурри пысăк пĕлтерĕшлĕ. Шел пулин те, пур чухне те хăйсем алла илнĕ профессипе ĕç тупма май çук. Çавна май урăх профессисене вĕренме, ĕç шырама тивет. Ĕçсĕррисене пособи тӳлеççĕ. Çак ĕçе, тĕпрен илсен, районти ĕçпе тивĕçтерекен центр туса пырать. Паян ĕç рынокĕнчи лару-тăру еплерех-ха, ĕçпе тивĕçтерекен центра пыракансен ыйтăвĕсене татса парассипе мĕнле ĕçлесе пыраççĕ? Çак ыйтусем çине хуравлама ыйтнă район хаçачĕн сотрудникĕ В. ШАПОШНИКОВ асăннă центр ертӳçинчен Тамара Афанасьевна АНТОНОВАРАН.***

**– Тамара Афанасьевна, хăвăр служба пирки малтанах пĕтĕмĕшле мĕн калană пулăттăр?**

– Пурте пĕлетĕр ĕнтĕ, пирĕн центра районта 1991 çулхи сентябрь уйăхĕнче йĕркеленĕ. 15 çул хушшинче çынсене ĕçпе тивĕçтерессипе пирки калакан саккуна 13 хутчен улшăнусем кĕртнĕ. Кăçал та улшăнусем пулчĕç.

Раççей Федерацийĕн Социаллă аталану министерствин 2006 çулхи июлĕн 3-мĕшĕнчи 513 № хушăвĕпе гражданасене юрăхлă ĕç тупса пама пулăшассипе тата ĕç паракансене ĕçлекенсемпе тивĕçтерессипе федераллă службăн административлă регламентне çирĕплетнĕ. Районти ĕçпе тивĕçтерекен центр та октябрь уйăхĕнчен тытăнса çак административлă регламента пурнăçа кĕртессипе ĕçлеме тытăнчĕ.

Çак регламентăн тĕп тĕллевĕ – патшалăх услугисен пахалăх шайне ӳстересси, ăна граждансемпе ĕç паракансемшĕн юрăхлă тăвасси. Малашне гражданлăха, ăçта пурăннине тата ĕçлекен е ĕçлемен çын пулнине пăхмасăрах пурте юрăхлă ĕç тупассипе патшалăх услугипе усă курма пултараççĕ. Ку регламента анлăлатса çĕнĕ çул тĕлне татах 8 положени пособисемпе стипендисем тӳлессипе тата 7 ĕçпе тивĕçтерессипе хатĕрлеме пăхнă. Çак çĕнĕлĕхсем пĕтĕмпех çынсен ыйтăвĕсене татса парассине лайăхлатассипе çыхăннă.

**– Халĕ вара цифрăсем çине куçар.**

– Кăçал ĕçсĕррисене пĕтĕмпе 1 миллион та 202 пин те 900 тенкĕ пособи, 129 пин те 223 тенкĕ стипенди тӳлерĕмĕр.

Хальхи вăхăтра ĕçсĕррисем 74 çын шутланаççĕ. Ĕçсĕрлĕх шайĕ 0,4 процентпа танлашать. Планпа çак тапхăрта 700 çынна ĕç тупса памалла пулнă пулсан, пирĕн центр урлă 718 çынна ĕçе вырнаçтарма май килчĕ. Вакансисен тата вĕренӳ ĕç вырăнĕсен ярмăрккисене 2 ирттертĕмĕр. Çынсене ĕç рынокĕнчи лару-тăру пирки планпа палăртнă чухлех пĕлтерсе тăнă. Ĕçсĕррисенчен уйрăмах социаллă хӳтлĕхе тивĕçлисене 4 çынна вăхăтлăх ĕç вырăнĕ тупса панă. Ĕç рынокĕнчи социаллă адаптаци енĕпе ĕçсĕррисене 30 çынна пулăшнă. 43 çынна професси илме майсем туса панă. Професси ориентацийĕ енĕпе 2516 çынна пулăшнă.

14 çултан тытăнса 18 çулччenхи çул çитмен çамрăксене вăхăтлăх ĕçсене 565 вырнаçтарнă. Ку вăл малтан палăртса хунă планăн 125 проценчĕ чухлĕ пулать.

Çулталăк пуçланнăранпа ĕçпе тивĕçтерекен центра ĕç шыраса 995 çын пынă. Вĕсенчен 981 çынна учета илтĕмĕр. Çав шутран хĕрарăмсем 616 е 63 процент. Хăйсен ирĕкĕпе ĕçрен тухнисем 139 çын, 16-29 çулсенчи çамрăксем 490, 14-18 çулсенчи çамрăксем 591, профессипе техника училищисемпе ятарлă вăтам пĕлӳ паракан вĕренӳ учрежденийĕсен 18-20 çулсенчи выпускникĕсем 9, ĕçе тытăнман выпускниксем 22 çын.

**– Çамрăксем çине сăмах çитрĕ пулсан, вĕсене ĕçпе тивĕçтерессi епле пулса пынă пирки тĕплĕнрех каласа пама ыйтнă пулăттăм.**

– Ĕçпе тивĕçтерекен центрта учета тăратнисенчен 718-шне ĕçпе тивĕçтерме май килнине асăнтăм ĕнтĕ. Вăл шутран 14-18 çулхисем 565 çын (79 процент) тата 16-29 çулхисем 371 (52 процент) пулчĕç.

Обществăлла ĕçсене 103 çынна янă. Вĕсенчен ытларахăшĕ çамрăксем. Вăл шутран 15-шĕ çав вырăнтах ĕçлеме юлнă. Обществăлла ĕçсене эпир район прокуратуринче, çар комиссариатĕнче, патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕнче, район администрацийĕнче, Муркаш пасарĕнче, Йӳçкасси, Юнкă тата Чуманкасси шкулĕсенче йĕркелерĕмĕр.

14-18 çулсенчи çамрăксем, тĕпрен илсен, шкулсенчи юсав ĕçĕсене туса ирттерме хутшăнчĕç, ял хуçалăх ĕçĕсенче тăрăшрĕç, палăксем таврашĕнчи территорисене тасатрĕç тата ытти ĕçсене пурнăçларĕç.

18-20 çулсенчи çамрăксенчен (професси училищисемпе ятарлă вăтам пĕлӳ паракан вĕренӳ учрежденийĕсенчен вĕренсе тухнисенчен) пĕри район администрацийĕнче техник (автоматизациленĕ управлени системи), иккĕшĕ Муркаш райповĕнче менеджер тата бухгалтер, тепри Чуманкасси шкулĕнче бухгалтер пулса ĕçлерĕç.

**– Эсир ĕç тупса парассипе кăна мар, тĕрлĕрен профессисене вĕрентессипе те сахал мар тăрăшатăр вĕт-ха?**

– Паллă ĕнтĕ, ĕç рынокĕнче мĕнле професси çыннисем паянхи куншăн кирлĕреххине шута илсе çак профессисене алла илме пулăшасси пирĕн тĕп задачăсенчен пĕри пулса тăрать. Професси ориентацийĕ енĕпе туса ирттерекен ĕç-хĕл пĕлтерĕшĕ пысăк. Вăхăт паян вĕрентӳ учрежденийĕсенче профильлĕ классем уçма хистет. Хальхи профессисен рынокĕнче мĕн суйласа илесси пирки тĕрĕс пĕтĕмлетӳ тума выпускниксене çăмăл мар. Çамрăксем хăш чухне хăйсен палăрман пултарулăхĕсем пирки те тĕплĕн пĕлеймеççĕ. Çавăнпа та професси ориентацийĕ çине пысăк тимлĕх уйăратпăр. Ку занятисенче вĕренекенсем профессисем пирки информаци илеççĕ, професси суйласа илессипе çыхăннă йăнăшсене анализ тăваççĕ, тĕрлĕрен профессиограммăсемпе буклетсене пăхса тухаççĕ тата професси суйласа илессипе ЭВМ çинче тест ыйтăвĕсем çине хуравлаççĕ.

Кăçал 13 профессипе ĕçсĕррисене вĕрентессине йĕркелерĕмĕр, 43 çынна вĕренме ятăмăр. Вăл шутран 16-29 çулхисем 36 çын, 18 çулчченхисем 18 çын.

Ытларахăшне водителе вĕрентнĕ. Кусем 20 çын пулчĕç. Электрогазосварщика 5 çын, повар-кондитера 4 çын, тракториста, парикмахера, бухгалтера, электромонтера 2-шер çын, офис менеджерне, персонал енĕпе ĕçлекен менеджера, сутуçăна, ПЭВМ операторне, газпа заправка тăвакан станци операторне 1-шер çын вĕреннĕ.

Професси вĕренĕвне вĕçленисем 60 çын пулчĕç. Вĕсене пурне те ĕç тупса панă.

**– Ĕç вакансийĕсем пирки мĕн калама пултаратăр, епле профессисем хальхи вăхăтра ытларах кирлĕ?**

– Ĕçсĕррисенчен ытларахăшне ĕçпе тивĕçтерес тесе вакансисен районти банкне тултарсах тата çĕнетсех тăратпăр. Çак тапхăрта ĕç паракансенчен 798 ваканси сĕннĕ, вĕсенчен 797-шне тивĕçтернĕ. Çав шутран 674 çынна ĕçпе тивĕçтерекен центр урлă ĕçе вырнаçтарнă. Вакансисенчен ытларахăшĕ Муркашри кирпĕч заводĕнчен, психоневрологи интернатĕнчен, икĕ райпоран, ял хуçалăх предприятийĕсемпе ытти организацисенчен пулнă. Профессисемпе илес пулсан, хăйсен профессийĕсемпе ĕç тупайманнисем хушшинче чăваш чĕлхипе литературин, пуçламăш классен учителĕсем, аслă пĕлӳ илмен тата 1С:бухгалтери программине пĕлмен бухгалтерсем тĕл пулаççĕ.

Çак вăхăта тимĕрçĕ 1, хурт-хăмăр ĕçченĕ 1, ветеринари санитарĕ 1, ял хуçалăх машинисемпе оборудованисене юсакан слесарь 1, ял хуçалăх производствин тракторист-машинисчĕсем 17, электрогазосварщиксем 2, электрооборудование юсакан тата пăхса тăракан электромонтер 1, агрономсем 3, ветеринари врачĕсем 4, тĕп зоотехниксем 7, тĕп инженерсем 4, тĕп механик 1, тĕп экономист 1, зоотехник 1, строительство енĕпе ĕçлекен инженерсем 2, ĕç сыхлавĕ енĕпе ĕçлекен инженерсем 5, инженер-механиксем 3, механик 1, участок электрикĕсем 3, энергетик 1, юрисконсульт 1, фельдшерсем 2, груз турттармалли автомашина водителĕсем 3 кирлĕ.

Çавна та палăртса хăвармалла. Районăн ĕç рынокĕнче юлашки вăхăтра тĕрлĕ отраслĕсем валли квалификациллĕ рабочисем кирли ытларах палăрать.

**– Пирĕн район Шупашкар хулинчен инçех мар вырнаçнă. Çавна май хăшĕсем тĕп хулара та ĕç тупма пултараççĕ. Унта ĕç тупассипе мĕн калама пултаратăр?**

– Кунта малашлăхлă профессисем çаксем шутланаççĕ: каменщиксем 229 çын кирлĕ, водительсем 221, электрогазосварщиксем 214, платниксем 159, юсав слесарĕсем 157, штукатур-малярсем 153, сутуçăсем 137, поварсем 130, электромонтерсем 123, слесарь-сантехниксем 100, кунсăр пуçне токарьсем, слесарьсем, фрезеровщиксем.

Акă, промышленность тракторĕсем тăвакан заводра ĕçлеме обрубщиксем 35 çын, электрогазосварщиксем 30 çын кирлĕ. Общежитипе тивĕçтереççĕ, ĕç укçи уйăхне 8-12 пин тенкĕпе танлашать. 1-мĕш номерлĕ типографи валли 4 печатник кирлĕ, ĕç укçи – 9-10 пин тенкĕ т. ыт. те. Кирлĕ информацие пирĕн патра илме пулать.

**– Тамара Афанасьевна, юлашкинчен мĕн калас кăмăл пур?**

– Çавна кăна каласа хăварас килет. Ĕçлес текен валли, тăрăшуллă, хăйĕн çине шанакан тата пуçаруллă çын валли хальхи вăхăтра ĕç тупăнатех. Çĕршывра та юлашки вăхăтра ял хуçалăх производствине, вăтам тата пĕчĕк бизнеса аталантарма сахал мар ĕç туса ирттереççĕ. Çамрăксене çурт-йĕрпе тивĕçтерме, хушма хуçалăха аталантарма нумай вăхăтлăх çăмăллатнă кредитсем уйăраççĕ. Апла пулсан пурнăçра тивĕçлĕ вырăн тупасси ытларах кашнинчен хăйĕнчен килет. Эпир ку енĕпе пулăшма пултаратпăр кăна.

---

Ăс-хакăлпа чун аталанăвĕн çулталăкĕ

## Кашнин ĕçĕ курăмлă

Чӳк уйăхĕн юлашки кунĕ Москакассинчи вăтам шкулта асăнмалăх ăслăлăх конференцийĕпе асра юлчĕ. Ăна ăс-хакăл, кăмăл-сипет çулне халалласа ирттерчĕç. Конференцие хутшăнса хăйсене тĕрĕслесе пăхма кăмăл тунă 23 вĕренекен тĕпчев ĕçĕсене тăватă секцие пайланса хӳтĕлерĕ. Вĕсен ĕçне йĕркелесе ертсе пыракансем кашни вĕренекен хăйĕн пултарулăхне кăтартма, шухăшне ăнăçлă хӳтĕлесе хăварма пултартăр тесе хытă тăрăшнă. Çакă конференци пуçлансанах лайăх курăнчĕ. Вăл пĕрремĕш минутранах тума шутланă пек, пĕр такăнмасăр пысăк хастарлăхпа туслă лару-тăрура хĕрсе пычĕ.

Чи пысăк йышпа палăрни “Обществăпа гуманитари секцийĕ” пулчĕ. Малтанах кунта 10-мĕш класра вĕренекен О. Трихалкина Пĕтĕм Раççей шайĕнчи конференцие хутшăнма хатĕрленĕ “Этем прависем” ĕçĕпе паллаштарчĕ. Ăна вăл О.И. Тарасов вĕрентекен ертсе пынипе йĕркеленĕ. Ку секцире Л.Е. Карпова учитель кăтартса пынипе вырăс чĕлхинчи жаргонсене тĕпчесе чылай кăсăклă материал пухнă Е. Лебедева çĕнтерчĕ. Жюри çавăн пекех 11-мĕш класра вĕренекен А. Капустина, М. Максимова, М. Столяров, 9-мĕш класри И. Сибякова, В. Ильина ĕçĕсем питĕ ăнăçлă пулнине палăртрĕ.

“Тăван ен” секцире 11-мĕш класри Е. Захарова ĕçĕ пĕрремĕш вырăна тивĕçлĕ тесе йышăнчĕç. Вăл Е.М. Захарова вĕрентекен ертсе пынипе Каршлăхри Александр Невски мăнастир историне тĕпченĕ, хăйĕн ĕçне чылай сăн ӳкерчĕксемпе, архив документсемпе çирĕплетнĕ.

М. Соколова тĕпчев ĕçĕнче хăйсен йăхĕн 7 сыпăкри тăванĕсемпе те паллаштарма пултарчĕ. Çак секцире иккĕмĕш вырăн çĕнсе илчĕ. Виççĕмĕш вырăн йышăннă С. Овчинников ĕçĕ те нумай çĕнĕлĕхпе паллаштарчĕ. Тĕпчев ĕçне вăл районти шкулсен историне халалланă. Çамрăк тĕпчевçĕ çирĕплетнĕ тăрăх районта шкулсем хăйсен пуçламăшне пĕлмеççĕ, юбилейĕсене тĕрĕс мар датăсемпе уявлаççĕ.

Ытти секцисенче те ĕçсем питĕ хĕрӳллĕ иртрĕç. Хутшăннисем нумай çĕнĕлĕх пĕлчĕç, хăйсен ĕçĕнчи хăшпĕр кăлтăксене те асăрхаса юлчĕç. Çакă вĕсене малашне те питĕ кирлĕ пулĕ. Конференцисем малалла та пулаççĕ-çке. Тепĕр тесен, хăйсен ĕçĕсене вĕсем конференци валли кăна та хатĕрленмен. Паян пĕлни, хăйсен тавракурăмне пуянлатни вĕсене пурнăçра, кирек хăш самантра та кирлĕ пулма пултарать.

Паллах, конференци ĕçне хастар хутшăннисене чысламасăр хăвармарĕç. Секцисенче пĕрремĕш вырăнсене çĕнсе илнисем районта иртекен конференцие хутшăнса палăрĕç. Анчах та паян чи савăнтараканни, хакли вăл вĕренекенсем тĕпчев ĕçĕсене хăнăхса хăюлланса пыни, малтанхи утăмранах хастаррăн тытăнса хăйсен вăйне шанма вĕренни.

**Н. ГЕРМАНОВ.**

---

Юбилярсем

## Анне пурри – телей

Москакасси ял клубĕ нумаях пулмасть ялти ятлă хĕрарăмсене уява чĕнсе йыхравларĕ. Çавра сĕтел тавра пуçтарăнчĕç аннесем. Клуб залĕнче пĕр сĕтел хушшинче 50 çулхи юбилярсем, тепĕр сĕтел хушшинче – 60 çулхисем, тепринче 75 çул тултарнă аннесем вырнаçнă. Кунтах нумай çул хушши шкулта ĕçленĕ Ф.П. Тринитатова, В.И. Беспалова, М.В. Шурнеева. Хуçалăх столовăйĕнче ĕçлесе канăва тухнă Е.А. Пушкина, Е.Л. Щербакова. Ял советĕнче ĕçленĕ Г.А. Алексеева, Л.П. Пушкина, Р.А. Захарова.

Уява клуб директорĕ, Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ культура ĕçченĕ Г. Голубева ертсе пычĕ. Вăл тĕрлĕ ыйтусем парса хăнасене калаçтарчĕ. Уява килнĕ аннесем пĕрин хыççăн тепри хăйсен пурнăçĕ, çемье телейĕ пирки каласа пачĕç. 90 çулхи Н.С. Белова вара ĕç кăна çынна ватăлтарманнине, вăй-хал парса тăнине пĕлтерчĕ.

Уяв хуçи, залри пĕртен-пĕр арçын, ял тăрăхĕн пуçлăхĕ М.М. Пушкин, хĕрарăмсене уяв ячĕпе саламларĕ. Çакăн пек чаплă та пултаруллă хĕрарăмсем ял тăрăхĕнче пурришĕн хĕпĕртенине пĕлтерчĕ.

Уява культура ĕçченĕсем тĕплĕ хатĕрленни кашни утăмрах курăнать. Зала чечексемпе, шарсемпе, плакатсемпе илемлетнĕ. Кунтах Хачăк ялĕнче пурăнакан Г. Егорован ал ăстин ĕçĕсем куçа илĕртсе тăраççĕ. Библиотека ĕçченĕ хатĕрленĕ “Сан ятупа” кĕнеке куравĕпе те паллашма тӳр килчĕ хăнасен. Уяв тăршшĕпех илемлĕ юрă шăранчĕ сцена çинче. “Шуçăм” халăх ансамблĕ ятарласа программа хатĕрленĕ аннесем валли. Искусство шкулне çӳрекен ачасем те ташă хыççăн ташă кăтартрĕç вĕсене.

Юлашкинчен аннесене парнесем парса чысларĕç. Тутлă кукăльпе, сиплĕ чейпе, юрă-ташăпа вĕçленчĕ аннесен уявĕ.

**Р. СИБЯКОВА, Москакасси ял библиотекарĕ.**

---

Юбилей

## 80 çул тултарчĕ ветеран

Декабрĕн 7-мĕшĕнче Аслă Отечественнăй вăрçă участникĕ, район администрацийĕн пуçлăхĕ çумĕнчи старейшинăсен канашĕн членĕ Николай Якимович Васильев 80 çул тултарчĕ.

Николай Якимович Мулкачкасси ялĕнче çуралса ӳснĕ. Аслă Отечественнăй вăрçă хыççăн хуçалăх ертӳçинче, Оринин ял Совет ĕçтăвкомĕн председателĕ пулса ĕçленĕ. Ветеран халĕ те районăн обществăлла пурнăçне активлă хутшăнать.

Мăшăрĕпе Мария Степановнапа вĕсем икĕ ывăлпа виçĕ хĕр пăхса ӳстернĕ.

Çак кунсенче юбиляра район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов, Раççей пенсионерĕсен союзĕн Муркаш районĕнчи филиалĕн председателĕ В.С. Краснов, ЧР Сывлăха сыхлас ĕç тата социаллă аталану министерствин районти социаллă хӳтлĕх пайĕн пуçлăхĕ Н.П. Петрова, депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕсем В.И. Вязовпа В.А. Калинин, Оринин ял тăрăхĕн пуçлăхĕ А.С. Суриков, тус-юлташĕсем саламланă, ăнăçусем, ырлăх-сывлăх суннă.

---

Канашлу

## Ĕç сыхлавĕн ыйтăвĕсемпе

Ĕнер район администрацийĕн ларусен пĕчĕк залĕнче ĕç сыхлавĕпе условийĕсен координаци канашĕн ларăвĕ иртрĕ. Комплекслă тĕрĕслев итогĕсемпе Чăваш Республикин патшалăх ĕç инспекцийĕ тупса палăртнă çитменлĕхсене пĕтерессi тата ун пирки информаци тăратассин вăхăтне пăхăнасси, кăçалхи 11 уйăхра производствăра пулнă инкексем пирки ЧР Сывлăха сыхлас ĕç тата социаллă аталану министерствин районти социаллă хӳтлĕх пайĕн пуçлăхĕн çумĕ А.Н. Кузьмин, сиенлĕ тата сывлăхшăн хăрушă производствăра ĕçлекенсене хушма диспансеризаци тата медицина тĕрĕслевĕ ирттерессi çинчен районти тĕп больницăн тĕп врачĕн çумĕ А.П. Чиновникова, Чăваш Республикин Президенчĕн 2006 çулхи октябрĕн 11-мĕшĕнче йышăннă «Чăваш Республикинче ĕç укçине ӳстерессипе пурнăçламалли хушма мерăсем çинчен» 87 № Указне пурнăçласси епле пулса пыни çинчен район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ А.Н. Иванов каласа пачĕç.

---

Юбилей

## Саламлатпăр



Пирĕн хаклă çыннăмăр, мăшăр тата атте – Муркашра пурăнакан **Виталий Анатольевич РЫЖКОВ** çак кунсенче сумлă юбилей, çуралнăранпа 50 çул çитнине паллă тăвать. Çав ятпа саламласа ăна çăл куç пек тапса тăракан вăй-хал, вăрăм ĕмĕр сукмакĕпе çирĕппĕн утма таса сывлăх, сута та такăр çул, ĕçре пысăк çитĕнӳсем тума ăнăçу, çемьере тăнăçлăх тата ăшпиллĕх, иксĕлми телей сунатпăр. Палăртнă ĕмĕт-тĕллевĕсем пурнăçланса пыччăр.

Тулăх пурнăç пултăр сан ялан,
Сывлăх ан хавшатăр нихăçан.
Ыр сунатпăр сана кăмăлтан,
Пирĕншĕн эс хаклă ылтăнран.

**Хĕрӳллĕ салампа мăшăрĕ, 3 хĕрĕ, кĕрĕвĕ, хăтипе тăхлачи, хуньашшĕпе хуньамăшĕ тата тăванĕсем.**



Юратнă мăшăра – Турай ял тăрăхĕнчи Мăн Токшик ялĕнче пурăнакан **Юрий Алексеевич АФАНАСЬЕВА** 50 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр. Ĕç ĕмĕрĕнче кирек ăçта ĕçлесен те ятна ямарăн, ĕçпех пирĕн хисепе тивĕçрĕн. Çак пархатарлă çулпа сана татах нумай çул пурăнма ырлăх-сывлăх, телей, ăнăçу сунатпăр. Эсĕ пирĕншĕн ăшă кăмăл çăл куçĕ, ăс-тăн, вăй-хал паракан ырă тĕслĕх. Эс пурри пирĕн пуянлăх, савăнăç. Сывлăху çирĕп, малашлăх çулу такăр пултăр, ватлăх мĕнне ан пĕл, мăнукусен савăнăçлă сасси кун-çулна илем кӳтĕр.

**Салампа мăшăрĕ, икĕ ывăлĕпе кинĕсем, хĕрĕ, 2 мăнукĕ, хăти-тăхлачисем, йăмăкĕ, тăванĕсем.**